# «Эпир – ҫут ҫанталӑк ачисем»

**Ака уйӑхӗн 19-мӗшӗнче Чӑваш наци библиотекин пӗр пӳлӗмӗнче Чӑваш халӑх художникӗн Владимир Агеевӑн «Константин Иванов яш-кӗрӗм ваййинче» картинин куравӗ уҫӑлчӗ. Ун чухне май килменрен тепӗр кунне ӳнерҫӗн ӗҫне пырса куртӑмах. Агеев картинисене тӳрех палласа илме пулать. Унӑн хӑйӗн алли, тавра курӑмӗ, манерлӑхӗ. Ҫакна чӑвашсен паллӑ ӳнерҫисем тахҫанах асӑрханӑ.**

«Константин Иванов яш-кӗрӗм ваййинче» картина умне пырса тӑтӑм. Вӑл ыттисенчен уйрӑмраххине тӳрех палӑртмалла. Тӗссен ылмашӑвӗ таҫта аякка, урӑх ҫӗре чӗнет пек. Вӑл – вӗҫӗ-хӗррисӗр. Агеев сӑнарланӑ тӳпе лӑпкӑлӑхра тӗлӗрмест, вӗҫӗмсӗр ҫаврӑнать, йыхӑрать, ӗмӗрӗн тӗрлӗ юхӑмӗнче пулса курма чӗннӗн туйӑнать. Ӳнерҫӗ сӑррисем ҫут ҫанталӑкӑн тӗрлӗ енлӗ сӑнсӑпатне куҫса кӗвве ҫаврӑнаҫҫӗ. Вӑйӑ картинче ташӑ ҫеммипе хуҫакан хӗрсен, яшсен сӑнарӗсем те пӗрешкел мар, кашнин сӑнне мӗнле те пулин уйрӑмлӑхпа палӑртма тӑрӑшнӑ. Акӑ пӗр каччӑ вӑйӑ картинчен тухнӑ та хӑйпе хӑй кӳлешсе ларать. Мӗн сӑлтавпа? Е ушкӑн йышӑнман-и ӑна? Тен, хӑйӗн юнтармӑш кӑмӑлӗпе килӗшӳсӗр ӗҫ тунӑ? Сӑлтавсӑр мар. Акӑ, Н.Г.Гарин-Михайловский ташӑра ҫаврӑнакан чӑваш хӗрӗсем пирки ҫырса хӑварнӑ йӗркесем: «Хӑш-пӗр чухне вӗсен юрри тутлӑ шӑршӑ саракан ҫарансенчен тӳпене янӑраса ҫӗкленет, тӑри юррипе пӗрлешсе ачаш та лӑпкӑ кӗвве куҫать, иртсе кайнӑ вӑхӑта тепӗр хут ҫаврӑнса пӑхтарать... Мӗн вӑл опера? Мӗн вӑл романс? Май пур-и кунашкал юрра шухӑшласа ятарласа ҫырма? Иртнӗ ӗмӗрсен ҫурхи вӑхӑчӗсене тата ачаш та тунсӑхлӑ саманчӗсене ҫакнашкал ӑсталӑхпа чуна тивмелле кӗвӗлесе пама пултараҫҫӗ-и вӗсем? Икӗ пин ҫул каялла халӑхӑн иртсе кайнӑ пурнӑҫне, унӑн тӗрлӗ кисревӗ урлӑ ҫӑлӑнса юлнӑ ҫутӑ шухӑш-кӑмӑлне кӑтартса пама хӑвачӗ пур-и вӗсен? Кунашкал юрӑ ҫеммисене ятарласа шухӑшласа кӑларма май ҫук».

Ҫакна Владимир Агеев ҫирӗп тытса ӗҫлени курӑнать. Вӑйӑҫсен сӑнарӗнче нишлӗх те, пӑхӑнулӑх та ҫук. Пӗр тӗнчере пурӑнаҫҫӗ вӗсем, шикленӳсӗр, иккӗленӳсӗр. Сӑмахран, вӑйӑ картинче ҫаврӑнакан чӑваш хӗрӗсене сӑнаса тӑракан Гарин-Михайловский вӗсен кашни хускавӗ нумай пӗлтерӗшлӗ, ҫыпӑҫуллӑ пулнине асӑрхать. Юлашкинчен ҫакнашкал пӗтӗмлетӳ тӑвать: «Хӑш-пӗр чухне тӗлӗнмелле шухӑш-кӑмӑлпа тӗлӗкленсе ҫӳрерӗм. Ку ачаш та вӑйлӑ, ӑнлантарса пама тем ҫитмен кӑмӑл-туйӑм тӗлӗкӗ мар, чӑнласах пулса иртнӗ чӑнлӑх ӳкерчӗкӗсем! Вӗсем чуна та ҫӳҫентереҫҫӗ. Самана хыҫҫӑн самана шуса иртет, хирӗҫле юхӑма лекнӗ вӑхӑт юхан шывӗ те аваллӑхран каялла ҫула тухнӑн туйӑнать».

Тӑван халӑхӑмӑрӑн йӑли-йӗрки унӑн шухӑш-кӑмӑлне хӑйне евӗрлӗ вӑрттӑнлӑхӗпе тӗлӗнтернӗ. Пысӑк культура шайӗпе аталаннӑ вырӑс ҫыравҫипе чӑвашсен паллӑ мар тӗнчи хӑйӗн тӗшмӗшлӗхӗпе те илӗртнӗ пулас. Кунашкал экзотика унӑн шухӑш-кӑмӑлне авалхи чӑвашсен паллӑ марлӑхӗпе ҫаварса илни лайӑх курӑнать. Ӳнерҫӗ-и, мусӑкҫӑ-и е ҫыравҫӑ-и – пӗр пеклӗхре пурӑнма пултараймаҫҫӗ. Ку ҫеҫ те мар... Кашни хӑйӗн тӗнчин ӳплинче ӑсталӑхне туптать, ҫӗнӗлӗх шырать, пӗр пеклӗхрен хӑтӑлать.

Кунта Поль Гоген художник ҫулйӗрӗ ҫинчен асӑнса хӑварни вырӑнлӑ. Тӑван ҫӗр-шывран, Францирен, тухса кайса ешӗл Таити утравӗнче пултарулӑхне урӑх тавра курӑмпа ҫӗнетекен художникӑн сарӑмсӑр шӑпи телейлӗ мар. Таити хӗрарӑмӗсем – кивӗ бронза пек тӗксӗм ӳтлӗ Афродитӑсемпе Венерӑсем – уншӑн кӑмӑл пусаркӑчӗ тата пултарулӑх шыравӗ. Поль Гогена йӑлӑхтарса ҫитернӗ цивилизаци те, шурӑ ӳтлӗ улпутсен икӗ питлӗ япшар пурнӑҫӗ те художник пирӗ ҫинчен тухса ӳкет. Ют ҫӗрсен пурнӑҫне тӗпчет вӑл. Ҫапах та Таитири ҫынсен ултавсӑр йышӗнче хӑйне яланах пӗччен туять. Художник ирӗксӗрех Гоген поэт пулса тӑрать. Акӑ мӗнле сӑнласа кӑтартать вӑл ҫын тивӗҫне таптакан цивилизацирен тарса чун хӳтлӗхне тупнӑ пӗчченлӗхӗ пирки:



***• В.Агеевӑн «Константин Иванов яш-кӗрӗм ваййинче» картини.***

Мӑн йывӑҫ ларнӑ та чармакланса
тӳпенелле тип туратне кичеммӗн
тӑсать шӑм алӑ пек: «Эп – чӗрӗ!» –
тенӗн,
ҫӗкленчӗ йыт пырши авкаланса.
Тип йывӑҫа ача чулпа та пемӗ,
ӳкмест-ҫке ӗмӗлки те, иҫмасса.
Анчах та курӑк сулхӑн та
ҫемҫе-мӗн,
выртаҫҫӗ таитянкӑсем канса.
Эх, кайӑксен сасси! Выля
та шӑхӑр!
Хӗвеллӗ уҫланка кӗретӗп шӑпӑрт,
итлетӗп аякра янран юрра.
Эх, пыл пек сывлӑш!
Кӑн-кӑвак тӳпеҫӗм
хӗвеллӗ инҫете хуллен
чӗнсессӗн –
ҫак хӑрӑк йывӑҫ сарлака уйра
сехет йӗппи пек ма
шӑвать салхуллӑн?
Ӑшра ҫуралчӗ, тем тесен те, чуллӑ
сукмак тата пӗчченлӗхри чура.

Ҫапла кӗвӗленӗ хӑйӗн сӑввине Таитири Поль Гоген художник. Пӗчченлӗхри чура чӑн-чӑн ӑстасене нихҫан та канӑҫ паман. Тӑван ҫӗрӗ ҫинче хӗрсемпе яшсен вӑййипе хавхаланса тӑрать пулин те – ҫамрӑк Кӗҫтенттин ҫав пӗчченлӗхри чурaран хӑтӑлаймасть.

Кӑҫал Владимир Агеев ҫуралнӑранпа 80 ҫул ҫитрӗ. Хӑйӗн тӗрлӗ енлӗ ӗҫ-хӗлӗпе тӑван культурӑра вӑл пысӑк ӳсӗм турӗ. Паянхи кунсемпе аваллӑха сыпӑнтарса хальхи куракана чӑвашлӑха ӑнланма вӗрентрӗ. Тавтапуҫ!

**Николай ТЕВЕТКЕЛ**